Чĕнменрен-и, тусăм,
Темĕн тунсăхлан?

«Вăрман тăрри тикĕс», –
Тенĕ чăваш çынĕ.
Ман кун-çулăм тирĕс,
Тикĕс пек пулин те.

Хăш-пĕр чухне вăрттăн
Сивĕсем çитеççĕ.
Ун чух хĕлĕхсем те
Пăрпа витĕнеççĕ.

Ак часах çĕнтерĕ
Çут хĕвел хăвачĕ.
Хĕлĕхсем те юрă
Çĕнĕрен шăратĕç.

***

Эс хитре. Çийĕнте
Ялкăшать пурçăн тум,
Кăтралатнă çӳçӳ
Сан питне эрешлет.
Илĕртӳллĕн кулать
Писевленĕ туту,
Ăнланатăп – саван,
Сана куншăн – рехмет.

Вальс кĕвви шăранса
Илтĕнсен вăйăра,
Эс мăнаçлăн пăхса
Çĕкленен чи малтан.
Авкаланчăк, чечен
Çаврăнан ташăра,
Сисĕнет, ман пекки
«Урăх çуккă ялта».

Юрĕ. Урăх ан пултăр.
Тек кирлĕ те мар...
Кур, епле ыттисем –
Пирĕн тантăш-хĕрсем?
Лăпкăн, ăшшăн пăхни –
Яш чĕрешĕн кăвар,
Илемленнĕ ĕçре
Ытарми сăнĕсем.

Кашниех тăрăшать
Ырă чунлă пулма,
Ĕççинче те – ĕçчен,
Вăйăра та кал-кал.
Пĕр эс çех вĕçкĕнле
Тыткалатăн хăвна,
Пĕр эс çех ĕççинче
Курăнатăн сахал.

# Энтип Ваççи

Энтип Ваççи (Антипов Василий Иванович) 1937 çулхи кăрлачăн 17-мĕшĕнче Самар облаçĕнчи Клевлĕ районĕнчи Хура шыв ялĕнче çуралнă. Вăтам шкултан вĕренсе тухсан ялти клуб заведующийĕ, чукун çул çыхăнăвĕн юсав бригадин бригадирĕ, слесарь пулнă. Чăваш çĕршывне куçса килсен Çĕнĕ Шупашкарта стройкăра ĕçленĕ, каярах нумай тиражлă хаçатăн тата вырăнти радиовещани редакторĕ пулнă. 1974-1977 çулсенче Энтип Ваççи Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕнче тата тĕп редакторĕнче вăй хунă. Каярах вăл И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчен тата СССР Писателĕсен союзĕ çумĕнчи литературăн аслă курсĕнчен вĕренсе тухнă, ун хыççăн Чăваш Республикин Писательсен союзĕн литконсультанчĕ тата правлени председателĕн çумĕ пулнă, Чăваш Республикин Вăрман министерствинче ĕçленĕ.

Энтип Ваççи 1977 çултанпа СССР Писателĕсен союзĕн членĕ. Тăван ли-

тературăри çитĕнӳсемшĕн ăна «Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ» хисеплĕ ят панă. Унăн паллăрах кĕнекисем: «Çăлкуç» (1974), «Алăри асамат» (1976), «Туслăх кăшăлĕ» (1977), «Пыл çунă ир» (1979), «Юрату юрри» (1984), «Самана» (1987).

Поэт публицистика жанрĕнче те ăнăçлă ĕçлет.

## АННЕМ ЧĔРИ ТАПАТЬ МАН КĂКĂРТА

Аннем чĕри тапать ман кăкăрта,
Тасалăхĕ ун – ăшă кăмăлта,
Эп саврăм унпала этемлĕхе, –
Мухтав сана, анне, ĕмĕрлĕхе!

Атте чĕри тапать ман кăкăрта,
Вăл харсăр арăслан та, кайкăр та,
Вĕрентрĕ вăл мана тĕрĕслĕхе, –
Мухтав сана, атте, ĕмĕрлĕхе!

Туссен чĕри тапать ман кăкăрта,
Вăл нихăçан сӳнми шĕл кăвартан,
Ун ăшшинче упрарăм пĕрлĕхе –
Мухтав сана, туссем, ĕмĕрлĕхе!

Савни чĕри тапать ман кăкăрта,
Чуна чĕм кĕртекен хевти пуртан
Вăл чĕртрĕ туйăмри хĕрӳлĕхе, –
Мухтав сана, савни ĕмĕрлĕхе!

Çĕршыв чĕри тапать ман кăкăрта:
Мĕльюн чĕре, юнташлă йыш пуртан,
Упрать ытарайми ирĕклĕхе, –
Мухтав сана, Çĕршыв, ĕмĕрлĕхе!

Пур сивĕнми чĕре ман кăкăрта:
Вăл – халăхăн, хăрми тĕп тымартан
Вăй-хал парать вăл вилĕмсĕрлĕхе...
Тав, халăхăм, сана ĕмĕрлĕхе!

## МĔНЛЕ ПУРНАН?

– Мĕнле пурнан? –
ыйтать манран хресчен,
Эп инçетрен яла пырса çитсен.
Те шӳтлесе, те чăнласах калатăп:
– Тунката кăклатăп...

– Мĕнле пурнан? –
чăрр! тинкерсе куçран,
Ыйтать те ырă тус-тăван манран:
– Хуллен-хуллен-çке... Чăвашла, –
вăлтатăп, –
Çăлтăр шутлатăп...

– Мĕнле пурнан, ачам? – ыйтать анне,
Çунаттине сарса ик хул çине.
– Аван! Чипер! – вăтанарах кулатăп, –
Телей шыратăп...

***

Пыл пухать пыл хурчĕ çеçкерен,
Наркăмăш ĕмет хура çĕлен, –
Теççĕ хăш-пĕр чух... Тĕпченĕрен
Уçнă пуль çавна – ăçтан пĕлен.

Пурнăçа сăнанă май куллен
Тепĕр шухăш çеçкине ак çурчĕ:
Наркăмăш тусан пылтан çĕлен,
Пыл тăвать наркăмăшран пыл хурчĕ.

***

Хуртлă улмасем ӳкеççĕ ир,
Туттисем ӳкмеççĕ кĕр çитмесĕр.
Ан çĕкле ытла васкавлăн, мелсĕр...
Çĕрнине, – çум курăкне ан сир.
Хăй ура умне кусса пыни
Хаклă мар – çӳлти нимрен чĕнӳллĕ.
Тӳсĕмлĕх çитсен, кĕр кунĕ тӳлĕ
Ырлăхпа – вăл пулĕ чăн-чăнни.
...Сăвăмра пиçет тӳпе улми:
Кăнтăрла – хĕвел,
каç-каç вăл – çăлтăр.
Сар кĕрччен ăна ан татăр – чăтăр:
Пиçменни пулаймĕ шăл çемми...
Тутлă сĕтекпе тулса çитсе

Шал енчен тӳлеккĕн çуталсассăн –
Тат ăна, этем: вăл пиçнĕ саншăн –
Хăналан, «мухтав çĕре!» тесе.

**ЧĂВАШ ÇĂКĂРĔ**

Вăрлăхне кура пулать пур çимĕç, –
Вĕрентетчĕç ваттисем пире.
Ĕмĕртен çавна сăнанă имĕш
Çын çамка тирне пĕре-пĕре.
Сиплĕ çумăр та, хĕвел ăшши те
Кирлине, паллах, манман вĕсем...
Эп çакна ас илтĕм, шурă çитĕ
Çавракa сĕтелĕме витсен.

Çĕр çынни... Епле пĕлсе, хаваслăн
Вăл çĕре хĕвел пĕрчи акать!
Çавăнпа пуль çăкăрĕ чăвашăн
Хĕвелпе Çĕр евĕр çавракa.
Çавăнпа анчах-ши? Çук-тăр, çук-тăр:
Акнă чух та вут умĕнче
Йӳçнĕ чустине унанă чух та
Шухăшĕ ун – Çĕр туртăмĕнче...

Çĕр çыннин тĕнчи ял пулнă ĕлĕк.
Халь – уçăлнăçем ăс, чун тӳпи –
Каçсерен курать вăл тертлĕ тĕлĕк:
Хăратать Çĕр чăмăрĕн шăпи!
Хĕç-пăшалсăр, вăрçăсăр тăвасшăн
Сирĕччĕ Çĕртен пур амака!
Çавăнпах пуль çăкăрĕ чăвашăн
Хĕвелпе Çĕр евĕр çавракa.

***

Çăлтăрсен çути юхать ман витĕр,
Хĕмленет ăрши куç шăрçинче.
Çутă кĕввинче чĕнӳ пур – илтĕр:
Тĕнчене хыпар ярать тĕнче.
Кам ăна илтет – асамлă тунсăх
Тыткăнлать чунне ĕмĕрлĕхе:
Шăрăх пек, тиет, çунать вăл унсăр,
Туйнăн çăлтăр чĕртнĕ пĕрлĕхе.
Çăлтăр çутине курман çын пилсĕр,
Çутă чĕнĕвне манни – пĕччен.
...Çăлтăрсен çути юхать ман витĕр,
Хĕм сапать ăрши куç шăрçинчен.

***

*А.Воробьева асăнса*

Элчел çинчен халь шухăшлас-и? –
Тин чĕрĕлнĕ çурхи тĕнче.
Хĕрсем карталанса ташлаççĕ
Слакпуç урамĕ варринче.
Виç аркăллă, хăюллă-сăслă
Кĕпи вĕсен епле хитре!
Пăхса ларасчĕ тарăн ăслăн –
Тем мурĕ йăлкăшать питре...
Ах, çаврăнаççĕ, явăнаççĕ
Нарспи инке йăмăкĕсем!
Эх, мĕншĕн, мĕншĕн эп хăна-ши! –
Чун хурланать аса илсен...
Тен, пиллĕ Слакпуçне эп килнĕ
Кăштах, кăштах кая юлса...
Вăтанчăклăн çĕн ӳсĕм кинĕ
Куçран пăхать-ха йăл кулса.
Пăхать вăл вăрттăн, шунă майăн
Чечек пек ташă картинче.
Тен, туйăнать?.. Мĕнех, нумайййăн
Йăпанакан çак çĕр çинче...
Поэт час-час телейсĕр пулнă
Пурнăçĕнче, юратура,
Вилсен анчах ăна чыс тунă –
Пĕр майлă, шăпине кура...
Епле асаплăн, тертлĕн сӳннĕ
Мухтавлă, аслă Кĕçтенттин!
Çитейрĕ унăн çутă кунĕ
Ытла кая юлса, халь тин...
Ăна савса калатпăр сăвă
Хăй ялĕнчи бюст умĕнче.
Чунра – е кӳренӳ, е тăвăл:
Пире те çăмăл мар, пичче...
Ак Воробьев Лекçей симлерĕ
Сăввин сĕтеклĕ сăмахне –
Тăп такăнĕ те вĕçлеймерĕ
Хавхаланса калассине!..
Тен, сисрĕ пуль поэтăн чунĕ
Çĕн тĕл пулу пулаймасса –
Çӳрет-ха унăн çутă кунĕ
Ялти çул тăрăх ялкăшса...
Слакпуç сывлăшĕпе сиплерĕм
Эп хам та тĕмсĕлнĕ чуна.

Тата тепре кунта чиперрĕн
Çитесчĕ ман! Тепре кăна...

## МĔН ПУЛЧĔ-ШИ МАНА?

Мĕн пулчĕ-ши мана? –
эп тĕлĕнетĕп:
Усал – хурлантарать, ырри – йĕртет...
Шăла çыртса хура-шура çĕнетĕп,
Хаваслăх хĕмĕ куçăма вĕтет...
Нуша – иртет, хавал –
çитет тени те
Хăш чух йăпатаймасть пек ăсăма.
Тата мĕскер куç курĕ, чунăм илтĕ?
Мĕн юлĕ каçарусăр асăма?
Сĕм тĕттĕм каç ӳкет те сывлăм – вучĕ
Çиçме пуçлать хĕвел тухсан анчах...
Тата ак тĕлĕнетĕп: темĕн пулчĕ –
Чун çемçелет... тен, эп ачаш ачах?..
Пит йӳн-шим хура-шур вăл? –
шухăшлатăп, –
Пит хаклă-шим ырри çак çĕр çинче?
Кăшт савăнсассăн та – йĕрсе кулатăп,
Вĕри шевле çиçет куç тӳпинче.

***

Мĕскер çухатрăм, мĕн туянтăм?
Мĕн – ĕмĕре, мĕн – саманта?
Мĕне – вăрр! ыватрăм та ятăм,
Мĕне – упратăп пит шалта?..

Ĕнер çех ăшăтнă кăвайт та
Паян кĕл пулнă, сип-сивех.
Ĕнер – пĕрне эп чыс тăваттăм,
Паян – вăл сивĕннĕ хăех...

Тин çех чĕрри – хăрма пуçланă.
Илем пулни – епле тискер!
Пин хут илнисене те машнă...
Туянтăм тем, анчах – мĕскер?

Çĕрти те, çĕр çинчи те, авă,
Çӳл тӳпери те – вырăнтах.
Мĕне иккĕленӳсĕр савăп?
Хăшне çухатăп-ши татах?..

***

Поэтсене юратăр, пикесем, –
Чечен куллăрсемпе хавхалантарăр,
Сив сăмахпа ан хурлантарăр...
Поэтсене юратăр, пикесем!

Поэтсене юратăр, аппасем, –
Вĕсемсĕр ĕненӳ те пулĕ йӳнĕ,
Янрамĕ юрă, çутă ĕмĕт сӳнĕ...
Поэтсене юратăр, аппасем!

Поэтсене юратăр, пикесем!
Ача чĕри вĕсен – ан суранлатăр,
Суранлатсан, ачашлăхпа сыватăр...
Поэтсене юратăр, пикесем!

Поэтсене юратăр, йăмăксем!
Вĕсемсĕр çын Илем мĕнне те манĕ,
Чунне çухатĕ, сивĕнĕ, чулланĕ...
Поэтсене юратăр, йăмăксем!

Поэтсене юратăр, пикесем, –
Вĕсен таса ятне ан хăрттăр ирсĕр –
Пĕрне те ан хăварăр кил хӳттисĕр!..
Поэтсене юратăр, пикесем!

Поэтсене юратăр, аннесем, –
Вĕсемсĕр «ют», «тăван» тени пăтранĕ,
Ырри путланĕ, усалли вăранĕ,
Сăпка юррисĕр ӳсĕç пепкесем...
Поэтсене юратăр, аннесем!

***

*«Вилетĕп пуль, аннем:*
*çӳл ту çине хăпартрăç...»*
*К.Иванован юлашки сăмахĕсем*

«Туртатчĕ пит нумай.
Йӳççин курки чăппиччĕ...
Суха тăватчĕ хресченпе пĕрле.
Тем пулчĕ çамрăклах – эй, çунчĕ питĕ!
Типсе хуралчĕ. Хăрчĕ йĕкĕтле!
Итлетĕп ват çынна.
Сăмахĕ унăн хурлă.

Тарăхтарса ярать поэт шăпи!
Вĕçеççĕ тĕксĕм пĕлĕтсем ял урлă,
Мăкăрланса çунать тӳпе хуппи.
Поэт çунса вилет –
Юлать, ыр халăх, саншăн
Асаплăн е хаваслăн тунă ĕç.
Поэт чĕри, пĕччен ан çун эс,
Ан шăн!
Поэтăн чунĕ, çăлтăр витĕр вĕç!
«Вилетĕп пуль, аннем:
Çӳл ту çине хăпартрĕç...» –
Итлетĕп аслати кĕрлевĕнче.
Сĕм пĕлĕт мĕлкисем
Кăлкан сăнне хуратрĕç.
Тӳпе хуппи мăкăрлантарать, ĕнсе.
Вилес самантĕнче –
Теме манса тем кĕтнĕн –
Мĕскер каласшăн пулнă-ши поэт?
Вăл – вăрттăнлăх.
Ăна хĕвел тин чĕртнĕ
Чĕнӳçĕ-асамат анчах пĕлет!
Чăлл! çутăлчĕ тӳпе,
Кун йăлкăшма пуçларĕ –
Çӳл ту çинче эп куртăм поэта:
Мăнаçлă палăк!.. Тĕлĕнсе куçларăм!
Сисмерĕм те – çухалчĕ вăл таçта...
Çиç, çиçĕм, çиç!
Анчах ытла ан ашкăн:
Поэт мĕлки ан сӳнтĕр тӳпере.
...Çӳл ту çине çӳл палăк
хăпартмашкăн
Те чул çитмест, те чун çитмест пире.

## Виталий Шемекеев

Виталий Дмитриевич Шемекеев 1937 çулхи нарăс уйăхĕн 27-мĕшĕнче Комсомольски районĕнчи Комсомольски салинче çуралнă. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн тăван колхозра строительте ĕçленĕ, 1957 çулта Пермь облаçĕнче профессипе техника училищинче вĕреннĕ, каярах металлурги заводĕнче вăй хунă. Чăваш çĕршывне таврăнсан пĕр вăхăт комсомол ĕçĕнче, унтан район хаçачĕн сотрудникĕнче тăрăшнă. 1974-1975 çулсенче вăл Муркаш районĕнче тухса тăракан «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакторĕ, каярах ДОСААФ райкомĕн председателĕ, Хачăк ял клубĕн заведующийĕ пулнă. 1986 çултанпа Чăваш писателĕсен союзĕн илемлĕ литературăна саракан бюро сотрудникĕнче вăй хунă.

В.Шемекеев 1986 çултанпа СССР писателĕсен союзĕн членĕ пулнă. Поэт 2003 çулхи çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче йывăр чирленĕ хыççăн вăхăтсăр вилнĕ.

В.Шемекеевăн паллăрах кĕнекисем: «Пурнăçпа ĕмĕт» (1981), «Çăлтăрсен çăл куçĕ» (1985), «Çĕр çинчех ман кил» (1988), «Юрату эрехне эп ĕçсе пĕтермен» (2003).

***

Çын,
çынпа калаçса
калаçмашкăн вĕрен,
сан кашни сăмахху тухтăр чун-чĕререн.
Ăш сăмах шутсăр кирлĕ паян тĕнчене:
кайăка, чĕрчуна...
Хăвăн пек çынсене.
Çын,
çынна юратса
юратмашкăн вĕрен,
юрату пур чухне юрри сӳнмĕ чĕрен.
Юратма пĕлекеншĕн –
тĕнче савăкрах:
сар хĕвел ăшăрах,
çăлтăрсем çутăрах.